Диспансеризаци ыйтăвĕсемпе

Сывлăх малти вырăнта пултăр

Сывлăх пирки калаçнă чух çыншăн ун пек хакли урăх çук тетпĕр. Кашнин хăйĕн сывлăхне упрасси, тĕрĕслесе тăрасси малти вырăнта пулмалла. Çавăнпа диспансеризаци тени те пирĕншĕн халĕ ют мар. Сывлăха анлăрах тĕрĕслес ĕç пирки каласа пама «Муркаш районĕн тĕп больници» муниципаллă сывату учрежденийĕн поликлиника ертӳçи А.П. ЧИНОВНИКОВА акă мĕн каласа пачĕ:

- Диспансеризаци çынсен сывлăхне тĕрĕслесе тĕрлĕ чирсене пуçламăш тапхăртах тупса палăртма май парать. Ăна пысăк квалификациллĕ специалистсем туса пыраççĕ, кирлĕ йышши медицина оборудованийĕсем те пур.

Кашни çыннăн сывлăх пирки чи малтан хăйĕн шутламалла. Халĕ пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсем те пур ĕнтĕ, участоксенчи терапевтсемпе те канашлама именмелле мар. Сăмах май каласан, шăпах çак врачсем туса хатĕрлеççĕ те диспансеризаци витĕр тухмалли çынсен списокне. Кăçалхи çул пирĕн районта 780 çынна тĕрĕслеме палăртса хунă. Вĕсен шутне ку таранччен пĕрре диспансеризаци тĕрĕслевне ирттернисем кĕмеççĕ.

– Çак майпа сывлăха тĕрĕслес ĕçре çĕнĕлĕхсем пур-и?

– Çĕнĕлĕхсем пур. Кун пек çĕнĕлĕхсене çынсем тахçанах кĕтнĕ ĕнтĕ. Пĕрремĕш хут кăçал 40 çултан иртнĕ хĕрарăмсен маммографи тĕрĕслевне ирттереççĕ. Кашни эрне кун вуншар хĕрарăма пирĕн больницăран тĕрĕслеве Шупашкара илсе каятпăр.

Çавăнпа пĕрлех тепĕр çĕнĕлĕх те пур. Халĕ диспансеризаци тĕрĕслевне тухакан арçынсем те, хĕрарăмсем те шыçă чирĕсене тупса палăртма юн параççĕ. «Кровь на онкомаркеры» тетпĕр эпир ăна. Лаборатори тĕрĕслевне вара каллех Шупашкарта ирттереççĕ. Çавăнпа та юн пама уйăрнă ятарлă кунсем пур - тунти кун тата юн кун. Юна питĕ тĕплĕн тĕрĕслеççĕ, çапла майпа шыçă чирĕсем аталаннине чи малтанхи тапхăртах, молекула тата клетка шайĕнчех тупса палăртма пултараççĕ. Ку хăйне май питĕ пысăк пулăшу.

– Укçа-тенкĕ пирки калас пулсан вара?

– РФ ятарлă медицина страховани фончĕ тата РФ страховани фончĕ ĕçлекен граждансене диспансеризаци тума укçа-тенкĕ уйăрать. Çавăнпа тĕрĕслев тума палăртнă кашни çын тимлессе питĕ шанас килет. Тĕрĕслеве килмен çыншăн укçа уйăрмаççĕ. Ун пек çын хăйĕн сывлăхĕ çине те çиелтен пăхнине çеç кăтартса парать. Пурăннă чух сывлăха тĕпе хумалли пирки манмалла мар.

– Диспансеризаци тĕрĕслеврен кăна тăмасть. Тата мĕнле ĕçсем кĕреççĕ ун шутне?

– Диспансеризаци тĕрĕслевĕнче чирсен малтанхи тапхăрне тупса палăртасси, сиплессине йĕркелесси тата реабилитацилесси тĕп вырăнта тăрать. Чи малтанах анлă сарăлнă чĕре чирĕсене, сахăр диабетне, рак тата ытти чирсене тупса палăртмалли меслетсемпе усă кураççĕ. Реабилитаци вăхăчĕ иртсен, тепĕр ултă уйăхран чирлĕ çынна тепĕр хут врачсем пăхаççĕ.

– Диспансеризаци тĕрĕслевне кĕске вăхăтра тусан аванрах пуль?

– Çапла. Енчен те çын больницăна тунти кун килчĕ пулсан, унăн кĕçнерни кун тĕрĕслеве вĕçлесен питĕ лайăх. Мĕншĕн тесен эпир кашни эрне вĕçĕнчех Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министерствине диспансеризаци витĕр тухнă кашни çын çинчен пĕлтерсе тăратпăр.

– Диспансеризаци хыççăн мĕнле пĕтĕмлетӳсем тăваççĕ?

– Диспансеризацие вĕçленĕ май пĕтĕмлетĕве ушкăнсем çине уйăраççĕ. Ăна участокри терапевт е пĕтĕмĕшле практика врачĕсем тăваççĕ.

Пĕрремĕш ушкăна сыввисене кĕртеççĕ. Иккĕмĕшне - чире пуçарма пултаракан факторсемпе çывăх пулнисене. Виççĕмĕш ушкăна чирлисем кĕреççĕ (организмĕнче чир паллисене тупса палăртнисем). Тăваттăмĕш ушкăнра - стационарта сиплемелли чирсемпе чирлекенсем тата хаклă та çӳллĕ шайри технологиллĕ медицина пулăшăвĕ кирлисем. Тепĕр ушкăнне шаларах кайнă чирсемпе чирлекенсене кĕртеççĕ.

Диспансеризацие ирттерсе эпир, медицина ĕçченĕсем, малтанах çынсен сывлăхĕшĕн тăрăшатпăр. Çакна пурин те шута илмелле.

Н. НИКОЛАЕВА
калаçнă.

Майăн 27-мĕшĕ - Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунĕ

Библиотека хăй патне илĕрттĕр

Хамăрăн пурнăçа эпир библиотекăсăр курма та пултараймастпăр. Мĕншĕн тесен хаçат-журналпа кĕнекесем вуласси – малалла аталанса пырас текеншĕн хăй тĕллĕн пулса пыракан пулăмсенчен пĕри. Паллах, телевидени, компьютер, видео тата ытти хатĕрсем паян библиотекăн конкуренчĕсем пулса тăчĕç. Анчах кĕнеке вара яланхи пекех кирлĕ. Пĕчĕк ачана та тĕнчепе паллаштараканни массăллă информаци хатĕрĕсенчен маларах кĕнеке пулса тăрать. Çавăнпа та ачана кĕнеке хаклă юлташ пулнине мĕн пĕчĕкренех ăнлантармалла.

Ачасемпе çамрăксем кĕнеке тата хаçат-журнал вулани халăхăн ăс-хакăлĕ, культури аталанса пынине пĕлтерет.

Пурнăç çĕнĕ технологисене те алла илме хистет. Тĕслĕхлĕ библиотекăсем вара ял çыннисен пур ыйтăвĕсене те тивĕçтерме пултараççĕ. Вĕсенче халĕ компьютер тата видеотехника пурри информациле интересленекенсене малалла пысăк утăм тума пулăшать. Пирĕн районтах çакăн пек библиотекăсем вăтăра яхăн. Тирпейлĕ тата шăплăх хуçаланакан пӳлĕмсенче мĕнле çын алла интереслĕ кĕнеке тытса вуласа киленмĕ? Е тата килсенче çырăнса илмен хаçат-журналпа та паллашма пулать. Вĕренӳре, ĕçре пулăшма пултаракан тата кирлĕ пулакан материалсене те тĕрлĕ дисксенче тупма май пур. Çавăнпа та çамрăксем библиотекăна çӳремеççĕ тенине кăшт хирĕçлес те килет.

Сăмахран, Чуманкасси ял тăрăхĕнчи тĕслĕх билиотекинче вĕсене тăтăшах курма пулать. Унта тахçантанпах ĕçлекен З.И. Иванова ку тĕлĕшпе акă мĕн каларĕ:

– Пирĕн библиотекăна ачасем те, çамрăксем те час-часах çӳреççĕ. Вĕсем дисксем çинчи тата Интернет материалĕсемпе интересленнипе пĕрлех кĕнекесем те нумай вулаççĕ. Çĕнĕ кĕнекесемпе питĕ интересленеççĕ. Тĕрлĕ словарьсемпе, наукăпа техника çинчен калакан кĕнекесемпе ĕçлеççĕ.

Пĕлтĕрхи çул çак библиотекăна 309 çамрăк вулакан çӳресе тăнă. Вĕсем пурĕ 7168 экземпляр кĕнеке тата хаçат-журнал вуланă.

Ачасем валли кунта тĕрлĕ конкурссемпе викторинăсем тăтăшах иртеççĕ. Спектакльсем те парăнаççĕ кĕнеке тусĕсене.

Паллă çынсен юбилейĕсене уявласси те йăлана кĕнĕ кунта. Кăçал И.Я. Яковлевăн çуралнă кунне халалласа З.И. Иванова ачасемпе пĕрле литература композицийĕ хатĕрленĕччĕ. И. Яковлевăн ачалăхне, вĕренӳпе ĕç çулĕсене куракансен умне яр уççăн кăларса тăратрĕç библиотекăн вулаканĕсем. Чуманкасси шкулĕнче вĕренекен А. Иванова, Д. Прокопьев, М. Герасимова, А. Волкова тата ыттисем хăйсене пысăк сцена çинчи пекех тытрĕç. А. Захаровапа Д. Иванова вара «Кулачă» калава выляса пачĕç.

Анчахрах Н. Никольский çуралнăранпа 130 çул çитнине те анлăн паллă турĕç библиотекăра. Хăйсен «Хыпарне» те (ватман çинче пулин те) кăларса пăхрĕç çамрăк вулакансем.

Библиотекăра çамрăк çемьесен клубĕ те ĕçлет. Çамрăк мăшăрсем çавра сĕтел тавра хăйсене интереслентерекен ыйтусене сӳтсе яваççĕ. Пĕр-пĕрин пурнăçри опычĕпе те паллашаççĕ.

– Нумай пулмасть хамăрăн çамрăк вулакансем хушшинче ыйтăм тунăччĕ. Вĕсенчен 70 проценчĕ кĕнеке тата хаçат-журнал вулама юратать, 12 проценчĕ вăхăтран вăхăта çеç вулать, 18 проценчĕ кĕнеке вулама юратсах каймасть (вĕренӳре е ĕçре кирлĕ пулнăран çеç). Çакă халĕ анлă сарăлнă «çамрăксем вулама юратмаççĕ» тенĕ сăмахсемпе килĕшсе тăмасть тесе шутлатăп», – тет Зоя Ивановна.

Унăн сăмахĕсем тĕрĕсех пуль. Паянхи пурнăç çамрăксене ăслă, анлă пĕлӳллĕ, хăйне май универсал пулма хистет-çке. Кăна вара яшсемпе хĕрсем çеç мар, аслăраххисем те ăнланса илнĕ ĕнтĕ.

Шел пулин те, ялти библиотекăсем каçхи 8-9 сехетчен ĕçлемеççĕ. Ял çыннин ĕçĕ часах вĕçленмест вĕт. Килти ĕçсем хыççăн пĕр-ик сехет библиотекăра чуна кантарсан вара питĕ аван пулмалла та...

Н. НИКОЛАЕВА.

Наши консультации

Применение судами условного осуждения

Действующее уголовное законодательство предусматривает различные варианты применения мер уголовно-правового воздействия к лицу, совершившему преступление. Одним из таких вариантов является условное осуждение. Существование в Уголовном кодексе РФ нормы об условном осуждении должно быть, вне всякого сомнения, расценено как одно из проявлений юридического гуманизма. Практика показывает, что не всегда карательные элементы воздействия на личность виновного достигают целей уголовной ответственности и наказания. Их применение, особенно в отношении лиц, которые виновны в преступлениях, не представляющих большой общественной опасности для общества, зачастую чревато серьезными негативными последствиями. УСЛОВНОЕ ОСУЖДЕНИЕ - институт Общей части уголовного закона, который регламентирует освобождение осужденного от реального отбывания некоторых видов основных наказаний при определенных условиях. У. о. регламентируется положениями ст. 73 и 74 УК РФ. При решении вопроса об у. о. суд руководствуется общими началами назначения наказания и учитывает характер и степень общественной опасности совершенного преступления, личность виновного, в т. ч. смягчающие и отягчающие обстоятельства (ч. 2 ст. 73 УК РФ). Суд, прежде чем применить условное осуждение или отказаться от него, изучает все свойства личности преступника, как связанные с преступлением, так и лежащие за его пределами. Условное осуждение позволяет использовать принудительное и воспитательное воздействие наказания в их необходимом сочетании и одновременно обеспечивает активное участие общественности в исправлении и перевоспитании лиц, совершивших менее опасные преступления. Условиями неприменения реального наказания являются требования не совершать нового преступления и доказать исправление своим поведением. При этом на осужденного может быть возложено исполнение определенных обязанностей, как в соответствии, так и в отдельности, что зависит от особенностей его личности. Если, назначив исправительные работы, ограничение по военной службе, ограничение свободы, содержание в дисциплинарной воинской части или лишение свободы, суд придет к выводу о возможности исправления осужденного без отбывания наказания, он постановляет считать назначенное наказание условным (ч. 1 ст. 73 УК РФ). Условным считается назначенное по приговору суда наказание, которое не приводится в исполнение в течение определенного испытательного срока, который также устанавливается судом при назначении наказания. В течение испытательного срока условно осужденный, как говорилось ранее, должен своим поведением доказать свое исправление. Размер испытательного срока зависит от срока назначенного наказания. Если назначается наказание до одного года лишения свободы или более мягкий вид наказания, испытательный срок должен быть не менее шести месяцев и не более трех лет; если же назначается наказание свыше одного года лишения свободы - испытательный срок устанавливается от шести месяцев до пяти лет (ч. 3 ст. 73 УК РФ). Испытательный срок может быть больше по своему размеру, чем назначенное наказание, может быть равным назначенному наказанию, а также может быть меньше назначенного наказания. При назначении условного наказания суд должен привести в приговоре мотивы принятого решения. Условное наказание может применяться не ко всем видам наказания, а только к перечисленным в ч. 1 ст. 73 УК РФ. При у. о. наряду с основными могут применяться и дополнительные виды наказаний. При этом закон не предусматривает принципа условности к дополнительным видам наказаний, все они должны исполняться реально. В резолютивной части приговора указывается, что условным признается только основное наказание. Закон не запрещает применение у. о. к лицам, ранее судимым, в том числе и к тем, у которых судимость не снята и не погашена в установленном законом порядке. УК РФ не устанавливает ограничения на применение у. о. за преступления различной степени тяжести (в т. ч. за тяжкие и особо тяжкие преступления), а также при назначении наказания по совокупности преступлений, хотя такое решение должно носить исключительный характер согласно разъяснениям высших судебных инстанций. Законом (ч. 5 ст. 73 УК РФ) предусмотрена возможность возложения на условно осужденного исполнения определенных обязанностей, в частности: не менять постоянного места жительства, работы, учебы без уведомления специализированного государственного органа, осуществляющего исправление осужденного, не посещать определенные места, пройти курс лечения от алкоголизма, наркомании, токсикомании или венерического заболевания, осуществлять материальную поддержку семьи. Суд может возложить на условно осужденного исполнение и других обязанностей, способствующих его исправлению. Контроль за поведением условно осужденного осуществляется уполномоченным на то специализированным государственным органом, а в отношении военнослужащих - командованием воинских частей и учреждений (ч. 6 ст. 73 УК РФ). Суд по представлению контролирующего органа может постановить об отмене у. о. и реальном исполнении наказания (ч. 3 ст. 74 УК РФ). В случае совершения условно осужденным в течение испытательного срока преступления по неосторожности либо умышленного преступления небольшой тяжести, вопрос об отмене или о сохранении у. о. решается судом (ч. 4 ст. 74 УК РФ). В случае совершения условно осужденным в течение испытательного срока умышленного преступления средней тяжести, умышленного тяжкого или особо тяжкого преступления, **у. о. отменяется однозначно**.

Являясь проявлением принципа гуманизма, условное осуждение дает возможность лицам, совершившим преступление, исправиться без отбывания назначенного наказания за содеянное. Однако, назначая наказание, хотя и условно, суды исходят из возможности добиться выполнения его целей - восстановления социальной справедливости, исправления осужденного и предупреждения совершения новых преступлений.

Э.Г. ВОЛКОВ,
судья Моргаушского районного суда.

Пĕлтерӳсем. Объявления

РЕДАКЦИЯ РАЙГАЗЕТЫ ПРОДАЕТ КРАШЕНУЮ ИЗГОРОДЬ ИЗ ШТАКЕТНИКОВ И ЖЕЛЕЗОБЕТОННЫЕ СТОЛБЫ.

Аттестат о среднем образовании, выданный МОУ Ординской СОШ в 2000 г. серии А № 6224609 на имя Дмитриевой Светланы Венедиктовны, считать недействительным.

Продается двухкомнатная квартира, 44,1 кв. м. с хозяйственными постройками: 2 сарая, погреб. Адрес: ул. 50 лет Октября, д. 22, кв. 4. Цена договорная.
Тел.: 8-919-678-89-18.

Продаю ВАЗ-21043 2003 года выпуска, двигатель 1500, 5-ступ. КПП, 1 хозяин, сигнализация, автомагнитола. Цена договорная. Тел.: 8-905-342-62-85, 2-16-58 (вечером). 1-2.

Спутниковые антенны *ТРИКОЛОР* с установкой, регистрацией и обслуживание. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-12.

Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк.
Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97. 5-15.

ПРОДАЮ ДОСКИ, БРУС, ПОДТОВАРНИК, ШТАКЕТНИК, Б/У МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ТРУБЫ. ВСЕ В КРЕДИТ! Тел.: 8-905-345-31-09. 3-6.

Магазин «Канцтовары» приглашает за покупками. Огромный выбор канцелярских товаров по удивительно низким ценам. Бумага «Снегурочка» – 112 руб. Экономьте с удовольствием.
Наш адрес:с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 5. Будем рады обслужить Вас с 9 до 18 часов. В субботу и воскресенье с 10 до 16 часов. Тел.: 8-927-993-58-33. 2-5.

Реализуем: кольца для колодцев ж/б D-0,7м, D-1,0 м,D-1,5 м, крышки, днища к ним, цемент. Услуги манипулятора. Доставка. Тел.: 67-82-52, 8-902-327-82-52. 2-11.

Срочно требуются парикмахеры. Оплата высокая.
Тел.: 8-927-991-82-80.

Продаю сегментную косилку КСФ-2,1, плуг - 3-35.
Тел.: 8-906-132-07-64. 1-2.

ГУП ЧР «Птицефабрика «Моргаушская» реализует курнесушек в возрасте 90 дней по цене 100 руб. за голову по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Кораккасы. Справки по тел.: 2-16-07, 65-2-48. 1-2.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 27.05.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3637.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.